**Мĕн пуян?**

Çичĕ çулхи Руслан ашшĕне:

— Атте санпа вăрмана пырам-и? — терĕ.

— Юрĕ. Кайăпăр.

Çитрĕç. Ашшĕ кĕрепле, кĕреçе аври тума пилеш вулли касрĕ. Пĕр вырăнта вĕсем шурă кăмпа, эмел курăкĕ пуçтарчĕç, мăйăр курланкисене хутаçа тата-тата хучĕç, Сергей Васильевич çывăхри пĕвере виç-тăватă пулă тытрĕ.

Руслан тĕлĕнсе:

— Атте, акă вăрман епле вăл, — терĕ.

— Вăрман пек пуянни, уй пек асли çук ачам, — хуравларĕ ашшĕ.

*Федорова, Л. Мĕн пуян? : [калав] / Л. Федорова // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 400-401.*